Муркаш район хаҫачӗ

# Ҫӗнтерӳ ялавӗ

1944 ҫулхи майӑн 5-мӗшӗнчепе тухать

81 (7721) № ✻ Шӑмат кун, 2009 ҫулхи октябрӗн (юпа) 10-мӗшӗ ✻ Хакӗ ирӗклӗ

Хуҫалӑх ертӳҫине сӑмах паратпӑр

## Йывӑррӑн пулсан та – малаллах



*Николай Лазаревич ЦАРЕВ «Передовик» ял хуҫалӑх производство кооперативне пӗрремӗш ҫул кӑна ертсе пырать. Ҫак тилхепене ӑна 2008 ҫулхи октябрӗн 17-мӗшӗнче шанса панӑ. Анчах та ертӳҫӗ мал курӑмлӑ пулни, мӗн палӑртнине пурнӑҫа кӗртессишӗн ҫине тӑни ҫак хушӑрах палӑрать ӗнтӗ. Хуҫалӑхӑн ҫак тапхӑрти ӗҫӗ-хӗлӗ пирки калаҫа пама ыйтрӑм эпӗ ӑна.*

**– Николай Лазаревич, пӗр ҫулталӑк пысӑк тапхӑр мар. Ҫӗнӗ ӗҫе кӗнӗхса илмелли вӑхӑт кӑна темелле. Апла пулин те, унччени ҫулсемпе танлаштарсан, малаллах талпӑнни курӑнать.**

– Ҫапла, хальхи вӑхӑтра пӗр вырӑнта тӑма юрамасть, малашлӑха пӑхса ӗҫлесе пырас пулать. Ҫавӑн чухне кӑна ял хуҫалӑх производствине ӳстерессипе те, выранти пӗлтерӗшлӗ ытти ыйтусене татса парассипе те ӳсӗмсем пулма пултарӗҫҫӗ.

Акӑ кӑҫалхи ака-суха, вырма ӗҫӗсем пирки ҫавна палӑртнӑ пулӑттӑм. Тӗш тырӑпа пӑрҫа йышши культурӑсене 586 гектар ҫинче акса ӳстертӗмӗр. Агротехникӑна ҫирӗп пӑхӑнассине, ӗҫсене вӑхӑтра тата пахалӑхлӑ туса ирттерессине тӗп вырӑна хутӑмӑр. Ҫапла вара вӗсене кашни гектар пуҫне вӑтам шутпа 20,6 центнер пухса кӗртни япӑх тесе шутламастӑп. Ҫӗр улми нумаях лартман, 8 гектар ҫинче кӑна пулнӑ вӑл.

**– Выльӑх-чӗрлӗх отраслӗнчи лару-тӑру еплерехха?**

– Кунта та мал туртӑмлӑ улшӑнусем пулмарӗҫ мар тесе шутлатӑп. Малтанах вара ҫавна палӑртса хӑварам. Ӗнен сӗчӗ чӗлхи ҫинче тесе ахальтен каламан. Выльӑхсене хӗл каҫарма утӑ 600 тоннӑна яхӑн, силос 1355 тонна, улӑм 60 тонна, фуражлӑх тырӑ 500 тонна янталӑрӑмӑр. Ку выльӑх апачӗ майракаллӑ шултра выльӑхсене ӑнӑҫлӑ хӗл каҫарма ҫитмелле. Хальхи вӑхӑтра вара хуҫалӑхра майракаллӑ шултра выльӑхсем пӗтӗмпе 152 пуҫ. Вӗсенчен сумаллисем 65.

(Вӗҫӗ 2-мӗш стр.).

**Сӑн ӳкерчӗкре: район пуҫлӑхӗ Ю.А. Иванов, район администрацийӗн пуҫлӑхӗн ҫумӗ, ял хуҫалӑх пайӗн ертӳҫи В.К. Ананьев, Ильич яч. хис. хуҫалӑх ертӳҫи И.В. Николаев тата «Передовик» хуҫалӑх ертӳҫи Н.Л. Царев ҫывӑх вӑхӑтрах хута каймалли ҫӗнӗ объектра. Н.Л. Царев кунти ӗҫсем епле пынипе паллаштарать.**

**Автор сӑн ӳкерчӗкӗ.**

Тыр-пул уявӗ

## Ӗҫсене тулли кӑмӑлпа пӗтӗмлететпӗр

***Кӗрхи кунсем ҫитрӗҫ. Ҫу каҫа мӗн ӗҫлени пӳлмере те утӑ-капанра. Паян эпир хамӑр тӑрӑшулӑхпа савӑнма та пултаратпӑр. Кунпа пӗрлех ӗҫсене пӗтӗмлетсе малашлӑх планӗсене палӑртма та меллӗ тапхӑр. Ҫӗр ӗҫӗпе пурӑнакан кашни ӗҫчен паян ҫапла тӑвать те.***

***Паян районта – Тыр-пул уявӗ. Ыран вара – Раҫҫей Федерацийӗнчи ял хуҫалӑхӗнче тата продукци тирпейлекен промышленноҫра ӗҫлекенсен кунӗ. Асӑннӑ уявсем умӗн эпир район администрацийӗн пуҫлӑхӗн ҫумӗпе, ял хуҫалӑх пайӗн ертӳҫипе Владислав Кириллович АНАНЬЕВПА тӗл пултӑмӑр, ял хуҫалӑх ҫулӗ Муркашсемшӗн епле иртнипе паллаштарма ыйтрӑмӑр.***

– Калаҫӑва чӗннӗшӗн тавах. Май килнипе усӑ курса районта пурӑнакан ҫӗр ӗҫченӗсене тата продукци тирпейлекен промышленноҫра вӑй хуракансене пурне те професси уявӗпе тата ҫак уява халалласа районта ирттерекен йӑлана кӗнӗ Тыр-пул уявӗпе ӑшшӑн саламлатӑп, малашне татах та ӳсӗмлӗрех ӗҫлеме ҫирӗп сывлӑх, чӑтӑмлӑх, ӑнӑҫу, телей, тулӑх пурнӑҫ сунатӑп. Тавах сире пархатарлӑ ӗҫӗршӗн!

Ял хуҫалӑхӗ пирӗн район экономикин тӗп никӗсӗсенчен пӗри пулса тӑрать. Агропромышленность комплексӗнче хастар та маттур, ҫӗр ӗҫне чунтан парӑннӑ пиншер ҫын вӑй хуни районна тивӗҫлӗ шайра аталанса пыма пулӑшать.

Хӑйсен професси уявне ял хуҫалӑх ӗҫченӗсем кӑҫал япӑх мар кӑтартусемпе кӗтсе илеҫҫӗ. Кӑҫалхи уй-хир ӗҫӗсенче эпир наука ҫитӗнӗвӗсемпе пӗлсе усӑ куракан, ял хуҫалӑх техникине тӑтӑш ҫӗнетсе агротехника ыйтӑвӗсене пӑхӑнса ӗҫлекен, ҫӗр пахалӑхне ҫулсерен хӑпартса пыракан, пысӑк репродукциллӗ ҫӗнӗ сортсемпе усӑ куракан хуҫалӑхсем ҫанталӑка кирек епле условийӗсенче те пысӑк тухӑҫ илме пултарнине куртӑмӑр. Ку вӑл ҫапла пулмалла та.

Пӗрчӗллӗ тата пӑрҫа йышши культурӑсене кӑҫал амбар виҫипе 30 пин тонна пухса кӗртрӗмӗр, ку вӑл пӗлтӗрхинчен 1 пин те 800 тонна ытларах. Гектар пуҫне тивекен вӑтам тухӑҫ 24,2 центнер пулчӗ. Пӗрешкел условисенчех ӑнӑҫлӑрах ӗҫлекенсем те пур. Акӑ Чкалов ячӗпе хисепленекен хуҫалӑхра вӑтам тухӑҫ 33,6 центнер, Ильич яч. хис. – 33,1 центнер, «Ударник» - 32,7, «Восток» - 31,1, «Герой» - 30 центнер. Муркашри чӑх-чӗп фабрики 76 гектар ҫинчен пӗр гектар пуҫне 50 центнер таран тӗш тырӑ пухса кӗртме пултарчӗ.

Кӑҫал типӗ ҫанталӑк пулчӗ пулин те, уйрӑм ҫӗнӗ сортсем хӑйсен тухӑҫӗпе туллин савӑнтарчӗҫ.

Ильич яч. хис. хуҫалӑхра (ертӳҫи Игорь Васильевич Николаев, тӗп агрономӗ Федор Аверкиевич Егоров) урпан «Владимир» сортне 20 гектар ҫинчен вӑтамран 63,4 центнер, кӗрхи тулӑн «Московская-39» сортне (20 гектар) гектартан 61,2 центнер, ҫурхи тулӑн «Симбирцид» сортне 2 гектартан 45-шер центнер илме пултарчӗҫ. «Ударник» сӑнавлӑ производство хуҫалӑхӗнче (ертӳҫи Платон Павлович Давыдов, тӗп агрономӗ Александр Николаевич Албутов) сӑра хатӗрлемелли ултӑ ретлӗ урпан «Вакула» сортне 168 гектар ҫинчен 48,8-шер центнер пухса кӗртрӗҫ. Суворов яч. хис. хуҫалӑхра (ертӳҫи Владимир Славич Андреев, тӗп агрономӗ Галина Никандровна Албутова) урпан «Эльф» сорчӗ 41 гектар ҫинчен 56,9-шер центнер, «Аргамак» сӗлӗ 64 гектар ҫинчен 49,2-шер центнер тухӑҫ пачӗҫ.

Пӗлтӗрпе ӗнтӗ, тыр-пул пухса кӗртес ӗҫ комбайнерсем ҫине ытларах тиенет. Хӑйсен тивӗҫӗсене пурнӑҫлассипе кӑҫалхи вырмара лайӑх ӗҫленӗ комбайнерсене палӑртса хӑварма уйрӑмах кӑмӑллӑ. Вӗсем: Чкалов яч. хис.хуҫалӑхри Борис Николаевич Никитин «Вектор» комбайнпа 1674 тонна, Суворов ячӗпе хисепленекен хуҫалӑхри Радонеж Виссарионович Кузнецов «АКРОС» комбайнпа 1617 тонна, «Герой» хуҫалӑхри Валерий Васильевич Ердуков «ДОН–1500» комбайнпа 1198 тонна тырӑ-пулӑ пуҫтарса илчӗҫ.

Хӑйсене шанса панӑ автомашинӑсемпе ял хуҫалӑх продукцине турттаракансене те ырӑ ятпа асӑнса хӑварас килет. Чи маттур водительсене ятранах палӑртӑпӑр. Вӗсем: Ильич яч. хис. хуҫалӑхри Виталий Петрович Ильин 62 пин тонна-километр тиев турттарнӑ, «Оринино» хуҫалӑхри Иван Алексеевич Ершов – 45 пин тонна-километр, «Ударник» хуҫалӑхри Иван Валерианович Степанов 32 пин тонна-километр ӗҫ тунӑ.

Маттур трактористсем те паян тав сӑмахӗсене тивӗҫ. Вӗсем: Суворов яч. хис. хуҫалӑхри Николай Витальевич Ивашкин (МТЗ-82 тракторпа 1686 эталон-гектар ӗҫ турӗ), Ильич яч. хис. хуҫалӑхри Алексей Аверкиевич Васильев (МТЗ-82 тракторпа 1275 эталон-гектар), «Оринино» кооперативри Ростислав Витальевич Ильин тата ыттисем те.

Ял хуҫалӑхӗнче паян механизацилени звеносем ӑнӑҫлӑ ӗҫлени ӗҫ тухӑҫӗн никӗсӗ пулса тӑчӗ. Вӗсене тухӑҫлӑ ертсе пыракансем ырӑ ята тивӗҫлӗ. Акӑ Суворов яч. хис. ял хуҫалӑх производство кооперативӗнчи механизациленӗ звено бригадирӗ Валерий Федорович Добрянский, «Ударник» хуҫалӑхри Геннадий Никонович Афанасьев, «Герой» хуҫалӑхри тӗп инженер Валерий Анатольевич Леонтьев пысӑк тухӑҫ кӑтартрӗҫ. Уй-хир бригадисене ертсе пыракансем те маттур та сатур пулчӗҫ. Тӗслӗхрен, «Ударник» хуҫалӑхри Светлана Петровна Максимована, «Свобода» хуҫалӑхри Кронид Германович Ярикова, «Оринино» кооперативри Алевтина Артемьевна Кочнована шанса панӑ ял хуҫалӑх техникине юсавлӑ тытса, ӗҫ ҫыннисене пӗрлештерсе пырса пӗтӗм хуҫалӑх ӗҫсене вӑхӑтра та пысӑк пахалӑхпа туса пыма мехел ҫитернӗшӗн ырӑ ятпа кӑна асӑнмалла.

(Вӗҫӗ 2-мӗш стр.).

Ыран – Ял хуҫалӑхӗнче тата продукци тирпейлекен промышленноҫра ӗҫлекенсен кунӗ

**ХИСЕПЛӖ ЯЛ ӖҪЧЕНӖСЕМ, ЧӐВАШ РЕСПУБЛИКИН АГРОПРОМЫШЛЕННОСТЬ КОМПЛЕКСӖНЧЕ ВӐЙ ХУРАКАНСЕМ!**

Сире хӑвӑрӑн профессиллӗ уявӑр ячӗпе – Ял хуҫалӑхӗнче тата продукци тирпейлекен промышленноҫра ӗҫлекенсен кунӗпе – чӗререн саламлатӑп!

Ҫӗр-аннемӗр хӑйӗнне ӑнӑҫлӑ ӗҫлесен пире вӑй парать, хӑйне юратнине ырпиллӗхпе тавӑрать. Ҫакна чӑваш хресченӗ пӗлнӗ, пӗлет, манмӗ те. Хресченӗн ҫӑмӑл мар ӗҫӗ халӑхӑмӑрта уйрӑм юратупа пурӑнать. Пирӗнтен кашниех авалхи ҫӗр ӗҫченӗн тӑрӑшулӑхне упраса малалла аталантарассипе тимлет, хӑйӗн ӗҫӗ ҫӗршыв аталанӑвӗшӗн пӗлтерӗшлӗ пулнине шута хурать.

Агропромышленность комплексне патшалӑх енчен пулӑшни прогрессивлӑ технологисене алла илме, производство культурине ӳстерме пулӑшать. Республикӑра выльӑх-чӗрлӗх фермисемпе комплексӗсене ҫӗнӗрен тӑвассипе, пурисене реконструкцилессипе тата модернизацилессипе 80 проект ӗҫлет. Ялсене ҫӗнӗ техникӑпа оборудовани, перспективлӑ тырӑ-пулӑ вӑрлӑхӗпе ӑратлӑ выльӑхсем килеҫҫӗ.

Республикӑра пӗчӗк хуҫалӑх формисем активлӑ вӑй илсе пыраҫҫӗ. Ялта пурӑнакан кашни 5-мӗш ҫемье килти хушма хуҫалӑха аталантарма ҫӑмӑллатнӑ кредитсем илнӗ.

Продукци тирпейлекен предприятисем тӑнӑҫ ӗҫлени яллӑ вырӑнсенче пурӑнма тата ӗҫлеме меллӗ условисем туса парать.

Чӑваш Республикинчи ялсем тӗпрен ҫӗнелсе пыраҫҫӗ. Ялсене ҫут ҫанталӑк газӗ ҫитни, урамсене асфальт ҫулсем сарни, ялсенче пӗтӗмӗшле врач практикин офисӗсем тата тӗслӗх библиотекӑсем уҫӑлни, физкультурӑпа спорт комплексӗсем яла ҫитни пирӗн ялсене ҫӗнӗ сӑн кӗртет.

2009 ҫул – Ҫӗр ӗҫченӗн ҫулталӑкӗ – Чӑваш Ен аталанӑвӗн ҫӗнӗ тапхӑрӗ пулчӗ. Пурсӑмӑр та пӗрле тӑрӑшса ӗҫлени пире хамӑрӑн тӗллевӗмӗрсен патне шанчӑклӑ утма пулӑшӗ. Ҫакна валли пурсӑра та ҫирӗп сывлӑх, ытлӑ-ҫитлӗ те мирлӗ пурнӑҫ, телей, юрату сунатӑп!

**Чӑваш Республикин Президенчӗ Н. ФЕДОРОВ.**

**ХИСЕПЛӖ ЯЛ ӖҪЧЕНӖСЕМ!**

Сире пурне те Ял хуҫалӑхӗнче тата продукци тирпейлекен промышленноҫра ӗҫлекенсен кунӗпе тата Тыр-пул уявӗпе чун-чӗререн саламлатӑп.

Уй-хир ӗҫӗсене вӗсленӗ хыҫҫӑн пӗрле пуҫтарӑнса ҫитӗнӳсене палӑртасси пирӗн районта ырӑ йӑлана кӗчӗ. Паян эпир производствӑра малта пыракансене чыслатпӑр. Ял хуҫалӑх ӗҫченӗн ӗҫӗ нихӑҫан та ҫӑмӑл пулман. Кӑҫал та, нимӗнле йывӑрлӑха пӑхмасӑр, ял хуҫалӑх культурисене йӗркеллех пухса илтӗр, умри тӗллевсене пурнӑҫа кӗртрӗр, ҫитес ҫул валли те тыр-пул никӗсне хывса хӑвартӑр. 2009 ҫул Чӑваш Республикин Президенчӗн Указӗпе килӗшуллӗн Ҫӗр ӗҫченӗн ҫулталӑкӗ пулни тепӗр хут ял ӗҫченӗн профессийӗ сумлӑ та хисеплине ҫирӗплетсе парать.

Тыр-пул уявне ял хуҫалӑх ӗҫченӗсем япӑх мар кӑтартусемпе кӗтсе илеҫҫӗ. Кӑҫалхи 9 уйӑхра ял хуҫалӑх продукцине иртнӗ ҫулхи ҫак вӑхӑтринчен 5,1 процент чухлӗ ытларах туса илсе реализациленӗ. Пирӗн тӗллев – малашне татах та ҫитӗнӳллӗрех вӑй хурасси.

Паян манӑн ҫавӑн пекех килти хушма хуҫалӑх тытакансене те, хресчен (фермер) хуҫалӑхӗсене те уйрӑммӑн тав тӑвас килет, мӗншӗн тесен район аталанӑвӗнче вӗсен тӳпи те ҫителӗклех.

Тавах сире, ял ӗҫченӗсем, пархатарлӑ ӗҫӗршӗн. Пурсӑра та ҫирӗп сывлӑх, телей, ӑнӑҫу сунатӑп. Ҫемйӗрсенче ялахах тату пурнӑҫпа килӗшуллӗх пулччӑр.

**Район пуҫлӑхӗ Ю. ИВАНОВ.**

### Саламлатпӑр



Хаклӑ мӑшӑрӑма, аннене, асаннене – Суткӳл ялӗнче пурӑнакан **Юлия Петровна ВАСИЛЬЕВАНА** 70 ҫул тултарнӑ ятпа ӑшшӑн саламлатпӑр. Хурҫӑ пек ҫирӗп сывлӑх, инҫе ҫул пек вӑрӑм ӗмӗр, иксӗлми телей, ҫутӑ ӑраскал, канлӗ ватлӑх сунатпӑр.

Пурнӑҫу тулӑх пултӑр, ачусемпе, мӑнуксемпе савӑнса пурӑнмалла пултӑр.

**Ӑшӑ салампа: мӑшӑрӗ, ывӑлӗсем, кинӗ, хӗрӗ, кӗрӳшӗ, мӑнукӗсем.**



Нашу любимую и самую дорогую мамочку, бабушку, прабабушку, праправабушку – **УГЛЕВУ Таисию Яковлевну** поздравляем с 80-летним юбилеем!

Когда ты рядом с нами, есть у кого учиться,<br>
Позволь в юбилей твой низко поклониться.<br>
Чтоб была согрета любовью, добрым словом,<br>
А главное – чтоб ты была всегда здорова!

**С поздравлением: сыновья, дочери, снохи, зятья, внуки, правнуки, праправнуки и родные.**



Хаклӑ аннене, хунямана, мамака – Суткӳл ялӗнче пурӑнакан **Юлия Петровна ВАСИЛЬЕВАНА** 70 ҫулхи юбилей ячӗпе чӗререн саламлатпӑр. Ҫирӗп сывлӑх, телей, вӑрӑм кун-ҫул сунатпӑр.

**Саламлаканӗсем: ывӑлӗ, кинӗ, мӑнукӗ.**

### ҪЫРӐНТАРУ

**Хаклӑ вулакансем! Районти «Ҫӗнтерӳ ялавӗ» хаҫата 2010 ҫулхи пӗрремӗш ҫур ҫулта илсе тӑма унченхи хакпах ҫырӑнтараҫҫӗ. Ултӑ уйӑха ҫырӑнмалли хак – 191 тенкӗ те 70 пус.**